26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
250(6487) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Тракторсене хӑвӑрт та лайӑх юсамалла

Малта пыракан Йӗпреҫ, Шупашкар, Комсомольски, Красноармейски, Елчӗк, Вӑрнар тата Канаш машинно-тракторнӑй станцийӗсем IV-мӗш кварталта тракторсем юсамалли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗҫ. Анчах республикӑри нумай МТС-сем плана пурнӑҫа кӗртеймесӗр юлас хӑрушлӑх умӗнче тӑраҫҫӗ.

Декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне IV-мӗш кварталта юсама палӑртнӑ 421 трактортан 281 трактора анчах юсанӑ. Ҫӗмӗрле, Улатӑр, Куславкка, Пӑрачкав, Тӑвай, Вӑрмар районӗсенче тракторсене юсамалли плана 10 процентран пуҫласа 35 процента ҫити ҫеҫ тултарнӑ. Етӗрне МТС-ӗ вара 12 трактортан пӗрне те юсаман. Ҫавӑн пекех Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Первомайски, Сӗнтӗрвӑрри, Шӑмӑршӑ МТС-ӗсем те плана ҫурри ытларах ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ.

Ӗҫ ҫакӑн пек начар пулса пынине малашне иеплле те тӳссе тӑма ҫук. Тракторсене юсамалли плана вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртменни — ҫуракине вӑхӑтра ирттерес ӗҫе чӑрмав кӳни, ҫуртыррисем акас ӗҫе вӑраха яни, тырпул тухӑҫне чакарса Тӑван ҫӗршывӑн оборона вӑй-хӑватне чакарни пулать. Тракторсене юсас ӗҫре питех те юлса пыракан Етӗрне, Ҫӗмӗрле, Улатӑр, Куславкка, Пӑрачкав, Тӑвай, Вӑрмар МТС-ӗсен директорӗсен—Перлович, Чумейкин, Училихин, Лаврентьев, Салмин, Яковлев тата Петров юлташсен, ҫавӑн пекех унти ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсемпе райсовет исполкомӗсен председателӗсен ҫакӑнтан халех хӑйсем валли тивӗҫлӗ вывод тумалла, тракторсене юсас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла, хӑвӑртлатмалла.

Тракторсене юсамалли IV-мӗш кварталти плана пур МТС-сен те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртес пулать. Ку ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанса ларни, ответсӑрла ӗҫлени ниҫта та пулма тивӗҫлӗ мар. Тракторсене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса пӗтерес тесен, МТС-ри мӗнпур майсемпе усӑ курни ҫеҫ ҫитмест-ха, сывӑхри заводсенчи, мастерскойсенчи майсемпе те туллин усӑ курас пулать.

Ҫапла тумалла: тракторсене юсассишӗн МТС директорӗпе механикӗсем ҫеҫ мар, трактор бригадин бригадирӗнчен пуҫласа кашни тракторист, МТС работникӗ Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫлӗхе туйса ӗҫлетӗр.

Ҫӗрпӳ МТС-ӗнчи работниксем ҫак ответлӑха туйса ӗҫлеменнине пула, иртнӗ ҫураки валли тракторсене начар пахалӑхпа юсаса хатӗрленӗ, ҫавӑн пирки МТС-ри хӑшӗр тракторсем ӗҫленӗ чухне час-часах юрӑхсӑра тухнӑ, ҫулталӑк тӑршшӗпех йӗркеллӗ ӗҫлеймен. Кӑҫал Ҫӗрпӳ МТС-ӗн работникӗсем, ҫавна шута илсе, тракторсене лайӑхрах юсама тӑрӑшни палӑрать. Унта тракторсене юсама 6 бригада тунӑ. Тракторсене бригадӑллӑ-узловой меслетпе юсаҫҫӗ. Мастерскойра ӗҫ условийӗ лайӑх. Степанов юлташӑн бригади уйрӑмах лайӑх ӗҫлет. Тракторсен ҫителӗксӗр пайӗсене вырӑнтах туса хатӗрлесе, унӑн бригади паянхи кун тӗлне 9 трактор юсанӑ, IV-мӗш кварталти план тӑрӑх бригадӑн 8 трактор юсамалла пулнӑ.

Ҫак ҫитӗнӗве Т. Степанов юлташӑн бригади мӗнле майпа тунӑ-ха? Бригадӑра кашни тракторист хӑйне хушнӑ ӗҫе пурнӑҫлать. Вӗсем ирхине 8 сехетре ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ те каҫхине 10 сехетченех ӗҫлеҫҫӗ. Трактористсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту вӑйлӑн сарӑлнӑ. Бригадӑна халӗ машинно-тракторнӑй станцин куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне панӑ. Бригада членӗсем ҫӗнӗ ҫулччен татах тепӗр трактора юсаса пӗтерме обязательство илнӗ.

Тракторсене юсас ӗҫре пур ҫӗрте те малта пыракан МТС-сен, трактор бригадисемпе уйрӑм трактористсен ӗҫ меслечӗсемпе усӑ курас пулать. Тракторсем юсамалли IV-мӗш кварталти плана 141 процент пурнӑҫа кӗртнӗ Йӗпреҫ МТС-ӗнче тракторсене юсанӑ ҫӗрте халӗ кулленех 90—100 ҫынран кая мар ӗҫлет. Унта кӑҫал машинӑсен кивӗ пайӗсене 27.267 тенкӗлӗх юсанӑ, ҫӗнӗ пайӗсене 5.508 тенкӗлӗх туса хатӗрленӗ.

Пирӗн партипе правительство тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисен запаслӑ пайӗсене туса хатӗрлес ӗҫе питех те пысӑка хурса хаклаҫҫӗ. Ҫавӑнпа, ҫитес ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрленес ӗҫре ҫӗрӗҫ работникӗсене пулӑшас тесе, оборона заказӗсене пурнӑҫласа тӑракан предприятисенех тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисен пайӗсем тума заказсем панӑ. Пирӗн республикӑра та запаслӑ пайсем тума чылай предприятисенче заказсем илнӗ. Анчах вӗсене пурнӑҫласси пачах ҫителӗксӗр пулса пырать-ха.

Промышленноҫпа транспорт предприятийӗсем ялхуҫалӑхне тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисен запаслӑ пайӗсене вӑхӑтра хатӗрлесе пани — ҫитес ҫураки ӑнӑҫлӑхӗшӗн, ҫитес тырпулшӑн кӗрешнинех пулать. «Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем тӑвас ӗҫе хакламаннине Совет Союзӗн оборона вӑй-хӑватне хавшатни пекех шутламалла» («Правда»). Хуҫалӑх тата парти организацийӗсен хальхи вӑхӑтра тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисен пайӗсем тумалли заказа мӗнле пурнӑҫланине куллен тӗрӗслемелле, ҫав заказсене вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртмелле тӑвас пулать.

Ҫитес ҫул тырпул акмалли задание кашни колхозпа совхозӑн кирек мӗн пулсан та ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлас пулать. Республикӑри чылай колхозсем кӗрхи ҫӗртме планне пурнӑҫа кӗртеймен пирки, вӗсен ҫав ҫӗре ҫуркунне сухаламалла пулать. Ҫак ӗҫсене тума республикӑри МТС-сен колхозсене вӑйлӑн пулӑшмалла. Ҫавӑнпа ҫитес ҫураки валли тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене хӑвӑрт та лайӑх юсаса лартмалла.

Вӑрман хатӗрлевӗн иккӗмӗш ҫурҫулхи планне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлар

Декабрӗн 17-мӗшӗнче вӑрман хатӗрлес ыйтупа республикӑри радиоперекличка пулса иртрӗ. Малтанах ВКП(б) Чкаловски райкомӗн секретарьне Никитин юлташа сӑмах панӑ. Пилӗк уйӑх ҫурӑ хушшинче Чкаловски районри колхозсем иккӗмӗш ҫурҫулта чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлемелли плана 42,8 процент, турттармалли плана 46,4 процент кӑна пурнӑҫланӑ. Вӑрман хатӗрлевӗн уйӑхлӑхӗнче вутӑ хатӗрлемелли плана пурнӑҫлас тӗлӗшпе 10 процент ҫеҫ ӳсӗм тунӑ.

Вӑрман хатӗрлес ӗҫ ку районра халӗ те сӳрӗккӗн пырать-ха. Районӗпе вӑрман хатӗрлевӗнче ҫуран 640 ҫын, лашапа 450 ҫын ӗҫлемелле пулсан, паянхи куна ҫуран 214 ҫын, лашапа 97 ҫын кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрманта ӗҫлекенсем ӗҫ нормине тултарса пыраймаҫҫӗ. Вӑрман касакансемпе турттаракансем хушшинче агитациллӗ-ӑнлантарулла ӗҫ те начар пулса пырать.

Ҫавӑн пекех вутӑ хатӗрлес ӗҫ Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Ҫӗмӗрле районӗсенче те вӑраххӑн пырать. Хӗрлӗ Чутай районӗн вутӑ хатӗрлеме ҫуран 270 ҫын, лашапа 115 ҫын ямалла пулсан, паянхи куна вӑрманта ҫуран 126 ҫын, лашапа 30 ҫын кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрлӗ Чутай райсовет исполкомӗн председателӗ Полянин юлташ, ку ӗҫе лайӑхлатма пулса, ВКП(б) Обкомӗпе ЧАССР Совнаркомне сӑмах панӑ. Анчах та Хӗрлӗ Чутай районӗн руководителӗсем хӑйсен сӑмахне пурнӑҫламаҫҫӗ-ха.

Тӑвай районӗ вутӑ хатӗрлес ӗҫе чӑтма ҫук вӑраха ярса пырать. ВКП(б) райкомӗн секретарӗ А. Молостов юлташ ку ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе татӑклӑн нимӗн те калаймасть.

Юлашкинчен радиоперекличкӑра ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче вутӑ хатӗрлесси государствӑн пысӑк ӗҫӗ пулса тӑнине палӑртрӗ. Шӑхасан, Йӗпреҫ, Сӗнтӗрвӑрри, Канаш районӗсен руководителӗсем ҫакна тӗплӗн ӑнланса илнӗ ӗнтӗ.

Анчах та Чкаловски, Хӗрлӗ Чутай, Кувакино, Ҫӗмӗрле районӗсем вутӑ хатӗрлес ӗҫе чӑтма ҫук кая хӑварса пыраҫҫӗ. Чарыков юлташ вӑрман хатӗрлевӗн иккӗмӗш ҫурҫулхи планне 1944 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен пур районсем те пурнӑҫлама тивӗҫли ҫинчен асӑрхаттарчӗ. Ҫак ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫлеме пирӗн пур условисем те пур. Ку тӗлӗшпе пирӗн паха опыт та сахал мар. Иртнӗ ҫулта вутӑ хатӗрлес ӗҫе республика ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. Ҫак ответлӑ та пысӑк ӗҫе кӑҫал та ӑнӑҫлӑн вӗҫлемелле.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЧЕРКАССЫ хулинчен кӑнтӑртарахри тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехри районра тӑшманпа ҫапӑҫса чылай ялсем тытса илнӗ, вӗсен шутӗнче—ВЕРГУНЫ, ЧЕРНЯВКА, НОВОСЕЛЬЦЫ, РУБЛЕВКА ятлӑ пысӑк ялсем.

КИРОВОГРАД хули енче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире янӑ, темиҫе ял тытса илнӗ.

МАЛИН хулинчен кӑнтӑвтарахра (РАДОМЫШЛЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) пирӗн ҫарсем хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене лайӑхлатасшӑн ҫапӑҫнӑ. Тӑшмана темиҫе ялтан хӗссе кӑларнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 15-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 37 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 100 самолетне персе ӳкернӗ.

ДЕКАБРӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 17-мӗшӗнче КИРОВОГРАД енче пирӗн ҫарсем, тӑшман пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире ярса, малалла тапӑнса пынӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 42 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 17 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Кировоград енче пӗр участокра тӑшман пехотин 2 полкӗ тата 70 танкӗ контратака тунӑ. Пирӗн артиллери нимӗҫсен 15 танкне хамӑрӑн позицисем патне ҫитиччченех персе ҫӗмӗрнӗ. Ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра нимӗҫсен йывӑр танкӗсемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупписен пӗр ушкӑнӗ пирӗн ҫарсен ҫапӑҫури речӗсем урлӑ каҫса, шалалла кӗрсе кайнӑ. Унта вӗсене засадӑра тӑракан совет танкисчӗсем атакӑланӑ. Вӗсем тӑшманӑн шала кӗрсе кайнӑ «Тигр» йышши мӗнпур 12 танкне тата «Фердинанд» йышши хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 6 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав ҫапӑҫура тӑшманӑн 800 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Тепӗр участокра пирӗн гварди чаҫӗсем малалла тапӑнса пынӑ, вӗсем, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Совет летчикӗсем, ҫанталӑк начар тӑнине пӑхмасӑрах, тӑшман ҫарӗсемпе ҫулйӗрӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Пирӗн авиаци нимӗҫсен 10 танкне тата ҫарсемпе ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 150 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, темиҫе ҫар эшелонне тата боеприпас склачӗсене сирпӗнтерсе янӑ. Тӑшман пехотине пӗр батальона ҫити ҫапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пинск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен Сталин юлташ ячӗпе тӑракан отрячӗ Припять шывӗ ҫинче нимӗҫсен моторлӑ икӗ катерне путарнӑ. Ҫав отрядри партизансен ушкӑнӗ тӑшманӑн ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз тата 10 платформа ҫӗмӗрӗлнӗ. Крушени пула 6 автомашина, 4 танк ҫӗмӗрӗлнӗ, 40 гитлеровец ытла вилнӗ е аманнӑ.

* * *

Хаяр ҫапӑҫусенче Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳрет. Юлашки уйӑхсенче фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен темиҫе соединенине аркатса тӑкнӑ. Нимӗҫсен 137-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 447-мӗш полкӑн противотанковӑй ротинчен тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Вальтер Кренцль ҫапла каласа панӑ: «Октябрь уйӑхӗнче вырӑссем пирӗн дивизие Днепр шывӗн тепӗр енне хӗваласа ячӗҫ. Днепр шывӗн сылтӑм енче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче вӑл темиҫе хут та поражени тӳсрӗ. Ноябрь уйӑхӗ пӗтеспе дивизире ҫапӑҫакан 300 салтак ҫеҫ тӑрса юлчӗ. 447-мӗш полк подразделенийӗн юлашкийӗсенчен боевой группа турӗҫ, унта 35 ҫын».

Нимӗҫсен 39-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 113-мӗш полкӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Генрих Промас ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизире ҫын питӗ сахал тӑрса юлчӗ, вӗсене вара хутӑш батальона пӗрлештерчӗҫ. Дивизи командирне Левенек генерал-лейтенанта тата 113-мӗш полкӑн командирне Кнетш полковника вӗлернӗ».

Нимӗҫсен 211-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 306-мӗш полкран Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ салтак Пауль Ц. ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ Хӗвелтухӑҫ фронтне Франципрен 321-мӗш пехотнӑй дивизири 588-мӗш полкпа пӗрле килтӗм. Ҫак полкӑн ӗҫӗсем ӑнмарӗҫ—вырӑссем ӑна ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. Эпӗ амантӑм та госпитале лекрӗм. Пӗр уйӑх иртсен, госпиталӗрен тухрӑм, мана вара хамӑн чаҫа ячӗҫ. Хамӑн чаҫа 15 кун хушши шыраса ҫӳресен ҫакна пӗлтӗм: 321-мӗш дивизие аркатса тӑкнӑ иккен, унӑн чӗрӗ юлнӑ салтакӗсене 211-мӗш пехотнӑй дивизири 306-мӗш полка янӑ иккен».

* * *

Аяларах нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Полесье облаҫӗнчи Кобылево ялӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Нимӗҫ захватчикӗсем пирӗн яла пӗтӗмпех ишсе пӗтерчӗҫ. 1943-мӗш ҫулхи январӗн вӗҫӗнче Кобылевӑна нимӗҫсен карательнӑй отрячӗ килчӗ. —Темиҫе кун хушшинче гитлеровецсем яла аркатса тӑкрӗҫ, 42 ҫынна персе вӗлерчӗҫ. Халӑх фашистла сыхӗлесенсенчен хӑтӑлас тесе вӑрмана тарса кайрӗ. Темиҫе уйӑх хушши ял пушах пулчӗ, унта никам та пулман. Май уйӑхӗнче нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем совет гражданӗсене пурне те хӑйсен ялӗсене тавӑрнма хушрӗҫ. Фашистсем: паянтан вара хресченсене пурӑнма хӑрушӑ пулмасть,—тесе шантарса, приказ кӑларчӗҫ. Ҫынсем нумайӗшӗ, нимӗҫ провокаторӗсем вӗсене капкӑна илӗртсе кӗртнине пӗлмесӗр, хӑйсен килӗсене тавӑрӑнчӗҫ. Чӑнах та вара, пирӗн яла часах эсэсовецсемпе полицейскисен отрячӗ килсе ҫитрӗ. Пуҫкасакансем мӗнпур арҫынсене уйӑрса илчӗҫ те персе вӗлерчӗҫ. Унтан фашистла ирсӗрсем хӗрарӑмсене, ҫитӗнмен ачасене тата ҫамрӑк ачасене вӗлерме тытӑнчӗҫ. Амӑшӗсем хӑйсен ачисене шеллеме йӑлӑнчӗҫ, анчах та нимӗҫ салтакӗсем ҫав ачасене прикладсемпе хӗнерӗҫ. Питӗ сахал ҫын кӑна тарса кайма пултарчӗ. Хӗрарӑмсемпе ачасене нимӗҫсем пӳртсене питӗрепитӗре лартрӗҫ, пӳртсене вара вут тӗртсе ҫунтарса ячӗҫ, ҫунакан ҫуртран сиксе тухма хӑтланакансене автоматсемпе пере-пере вӗлерчӗҫ. Ҫӑлӑнса юлнӑ Наталья Халимоненко тата ҫитӗнсе ҫитмен ача Николай Скакун каланӑ тӑрӑх, ҫав кун эсэсовецсем Кобылевӑра 900 ҫынна ҫити персе е ҫунтарса вӗлернӗ, вӗсенчен ытларахӑшӗ хӗрарӑмсемпе ачасем пулнӑ. Пирӗн яла нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн, совет боецӗсем ял хӗрринче гитлерла пуҫкасакансем персе вӗлернӗ совет гражданӗсен виллисене нумай тупнӑ. Иван Сыч, Федор Белый, Онуфрий Луцко тата ытти колхозниксен ҫурчӗсем тӑнӑ вырӑнта, ишӗлчӗксемпе кӗл хушшинче, ҫунса кайнӑ ҫынсен шӑммисене тупнӑ.

Ҫак калама ҫук тискер ӗҫсемшӗн ҫаксем айӑплӑ тесе шутлатпӑр: Василевичски районри жандармери начальникӗ—обер-лейтенант Клаузе, нимӗҫ коменданчӗ Ионус тата нимӗҫсен фашистла ытти ирсӗрӗсем те».

Акт ҫине ҫаксем алӑ пуснӑ: юстици подполковникӗ Васильев, майор Ребров, медицина службин майорӗ Мануилов тата ялсовет председателӗ Гайдаш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

СССР Верховный Совечӗн суйлавне тепӗр срока хӑварасси ҫинчен

СССР Верховный Советне суйлассине 1944-мӗш ҫулхи декабрь уйӑхӗччен хӑварас тата Совет Союзӗн пӗрремӗш созыври Верховный Совечӗн полномочийӗсене ҫав срокчен тӑсас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943-мӗш ҫулхи декабрӗн 16-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Канашри вагонсем юсакан заводри хурҫӑпа чугун шӑратакан цеха тата кислород станцине тӑвас ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ рабочисене, инженерла-техникла работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Хурҫӑпа чугун шӑратакан цеха тата кислород станцине тӑвас ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗшӗн Канашри вагонсем юсакан заводри уйрӑмах палӑрнӑ ҫак рабочисене, инженерла-техникла работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Елизавета Ивановна **Алякинӑна** — штукатура.
2. Павел Константинович **Базелева** — слесарь ӗҫӗпе монтаж ӗҫӗн мастерне.
3. Виктор Иванович **Бесценныя**—технически отдел начальникне.
4. Яков Васильевич **Васильева** — бетонщиксен бригадирне.
5. Фокия **Гарафутдиновӑна** — пулӑшакан рабочисен бригадирне.
6. Артем Андреевич **Дубина** — столярсен бригадирне.
7. Павел Михайлович **Кабалина**—бетонщике.
8. Петр Степанович **Круговоя** — электросварщике.
9. Иван Егорович **Киреева**—электриксен бригадирне.
10. Мария Ильинична **Ложкинӑна** — плотнике.
11. Гавриил Иванович **Миндорина** — маляра.
12. Андрей Федорович **Майбородана**—слесарьсен бригадирне.
13. Елизавета Никитична **Никитинӑна** — пулӑшакан рабочисен бригадирне.
14. Николай Матвеевич **Орлова**—электросварщике.
15. Сергей Георгиевич **Пищенина**—монтаж ӗҫӗсен прорабне.
16. Андрей Максимович **Пименова** — токаре.
17. Лев Соломонович **Портнова**—завод начальникӗн строительство енӗпе ӗҫлекен помощникне.
18. Семен Михайлович **Репина** — заводӑн главнӑй механикне.
19. Михаил Григорьевич **Смогоржевские** — старши мастера.
20. Давид Яковлевич **Суперфина**—ремонтно-механически цех начальникне.
21. Семен Прокофьевич **Ткаченкона** — электросварщике.
22. Иван Матвеевич **Телелекова**—слесарьсен бригадирне.
23. Алексей Васильевич **Цыкленкона** — слесарь-сантехниксен бригадирне.
24. Василий Николаевич **Шепелева** — сантехника коммуникацийӗсем енӗпе ӗҫлекен слесаре.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1943 ҫулхи декабрӗн 18-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗнче

Ҫӗрулми тӑррисене хатӗрлесси ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫак кунсенче ҫӗрулми тӑррисене вӑрлӑхлӑх касса хатӗрлесси ҫинчен сӳтсе-яврӗҫ.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫӗрулми вӑрлӑхӗсен фончӗсене хывасси Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Кувакино, Канаш, Ҫӗмӗрле, Етӗрне тата Улатӑр районӗсенче пачах ҫителӗксӗр пынине палӑртрӗҫ. Апла пулин те ҫак районсенчи организацисем, уйрӑмах ҫӗрӗҫ органӗсем, ҫӗрулми вӑрлӑхӗн фончӗсене пӗтӗмпех хывса ҫитерес тӗлӗшпе, ҫавӑн пекех ҫӗрулми тӑррисене вӑрлӑхлӑх касса хатӗрлес тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнман.

Ҫӗрулми лартса тумалли лаптӑка малалла татах ӳстерес шутпа, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ районсене, наркоматсемпе предприятисене ҫӗрулми тӑррисем хатӗрлеме ҫирӗп задание панӑ. Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарне Малов юлташа, Суту-илӳ Халӑх Комиссарне Ларисов юлташа, Чӑвашпотребсоюз президиумӗн председательне Терентьев юлташа тата райсовет исполкомӗсен председателӗсене ҫав плана халех колхозсем, предприятисем, столовӑйсем, учрежденисем патне ҫитерме хушнӑ. Пур колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче ҫӗрулми тӑррине вӑрлӑхлӑх хатӗрлесе пӑхса усрас ӗҫшӗн ответлӑ пулма уйрӑм ҫынсем уйӑрма хушнӑ.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗ районсенчи партипе совет организацийӗсене тата ҫӗрӗҫ органӗсене, предприятисемпе учрежденисен, подсобнӑй хуҫалӑхсен руководителӗсене ҫӗрулми тӑррисене хатӗрлес ӗҫе куллен ертсе пыма, ҫак ӗҫ пысӑк вырӑнта тӑни ҫинчен ӗҫҫынисем хушшинче ӑнлантарулла ӗҫе сарса пыма хушнӑ.

Совнаркомпа парти Обкомӗ суту-илӳ тата хатӗрлев организацийӗсене ҫӗрулмие, тӑррине касмасӑр, расходлама чарнӑ. Республика тулашне ямалла пулсан кӑна ҫӗрулми тӑррине касмаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех колхозсен руководителӗсемпе столовӑйсен директорӗсене, ытти предприятисемпе учрежденисен руководителӗсене лартма юрӑхлӑ ҫӗрулмие, тӑррине вӑрлӑхлӑх касса илмесӗр, расходлама чарнӑ. Ҫак йӗркене пӑсакансене ответ тыттармалла.

Колхоз председателӗсен хатӗрленӗ ҫӗрулми тӑррипе чи малтанах ҫӗрулми лартса тумалли лаптӑксене пысӑклатнӑ ҫӗрте усӑ курмалла, ытлашши юлнӑ ҫӗрулми тӑррине ытти колхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсене сутмалла.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ колхоз правленийӗсене колхозниксенчен ҫӗрулми тӑрри йышӑнас ӗҫе организацилеме сӗннӗ. Ҫӗрулми тӑррине вӑрлӑха юрӑхлӑ касса хатӗрлесе панӑ колхозниксене кашни килограмшӑн е вылӑхсем валли шултӑра апат, е, правлени ларӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ӗҫкунӗ памалла.

Колхоз правленийӗсене, ҫӗрӗҫ пайӗсене тата райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсене ҫӗрулми тӑрри хатӗрлес ӗҫе организациленӗ вӑхӑтра ҫӗрулми вӑрлӑхӗн фончӗсене хывассине сӳреклетме юраманни ҫинчен асӑрхаттарнӑ, 1944 ҫулхи ҫуркунне ҫӗрулми лартса хӑварма панӑ плана пурнӑҫа кӗртме мӗн чухлӗ вӑрлӑх кирлӗ, кирек мӗнле пулсан та ҫавӑн чухлӗ вӑрлӑх хатӗрлесе хума хушнӑ.

Ҫӗнӗ ҫул умӗн

Чаплӑ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн

Канашри вагонсем юсакан завод коллективӗ, союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен конференцийӗн историллӗ решенийӗсене сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, фронтпа ҫӗршыва тата ытларах продукци туса памашкӑн декабрь уйӑхӗнче нихҫанхинчен лайӑхрах ӗҫлеме пулчӗ.

Ҫӗнӗ ҫула завод коллективӗ ҫакӑн пек ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме тӑрӑшать: 1943-мӗш ҫулхи производство планне декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне 105 процент тултармалла, декабрь уйӑхӗнче планран иртерсе 5 вагон юсаса кӑлармалла, продукцин хӑйне ларакан хакне 5 процент чакармалла, ӗҫ тухӑҫлӑхне 10 процент ӳстермелле. Декабрь уйӑхӗнче электричество вӑйне 3 процент перекетлемелле, кашни рабочипе работницӑн ҫак уйӑхра задание 200 процентран кая мар тултармалла.

Халӗ пур рабочипе работница та ҫак обязательствӑсене ҫӗнӗ ҫулччен чыслӑн пурнӑҫлассишӗн социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса ячӗҫ.

— Эпир фронтпа ҫӗршывшӑн вӑхӑта шута илмесӗр ӗҫлетпӗр. Хӗрлӗ Ҫар умӗнчи тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлапӑр,—теҫҫӗ заводри рабочисем.

Ҫулталӑкри задание ытлашшипех пурнӑҫланӑ

ҪӖМӖРЛӖ. Райпромкомбинат коллективӗ декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫулталӑкри производство программине 103 процент пурнӑҫланӑ.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен цехпа урана тӑхӑнмалли япаласем ҫӗлекен цех декабрь уйӑхӗнчи задание те 60 процента яхӑн пурнӑҫларӗҫ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

Декабрĕн 15-мĕшĕнчи лару

Айăпласа çырнине нимĕçле куçарса парсан, суд айăпланакансене тĕпчеме тытăнать. Айăпланакансем пурте: Рецлав Рейнгард, Лангхельд Вильгельм, Риц Ганс тата Буланов хăйсен айăпĕсене пĕтĕмпех йышăнчĕç.

Чи малтан суд айăпланакан Лангхельда — нимĕçсен контрразведкин капитанне — тĕпчет. Лангхельд совет çыннисене массăллăн персе пăрахас ĕçе хăй хутшăннине йышăнать. Прокурор ыйтăвĕсене хирĕç ответлесе, Лангхельд çапла каласа парать: тыткăна лекнĕ çынсен лагерĕсенче гитлеровецсем совет çыннисене ытла та хăрушла асаплантарнă, суя актсем çырса, çав актсем тăрăх вара пĕр айăпсăр çыннисене пере-пере пăрахнă. Вăл çапла калать: Эпĕ те суя протокол çыртăм. Çав протокол çинче: тыткăна лекнĕ 20 çын тарма хăтланнă, тесе çырса çыртăм, тет. Фашистла [illegible] лагерьти çынсен [illegible] хăйсене хăтарас [illegible] кăтартнă. Вăл [illegible] лагерьти çынсен списокне илнĕ. Лангхельд çав протокола хăйĕн начальникне Люлляй майора панă. Лешĕ вара çав протоколта кăтартнă 20 çынна персе пăрахма хушнă. Çапла вара пĕр айăпсăр çынсене персе пăрахнă.

Лангхельд тата ытти нимĕç офицерĕсем те çавăн пек ĕçлени нимĕç çарĕнче система пулса тăнă. Малалла Лангхельд тата тепĕр калама çук хăрушă преступлени çинчен каласа парать. Ку хутра Лангхельд Украинăри пĕр айăпсăр 6 хĕрарăма пĕтернĕ. Вĕсем хресчен хĕрарăмĕсем пулнă. Тыткăна лекнисен лагерне вĕсем хăйсен хурăнташĕсене шыраса пынă. Лангхельд çав хĕрарăмсене (вĕсен хушшинче пĕри 5 çулхи ачапа пулнă) арестленĕ. Палачсем çав хĕрарăмсене суйса калаттарма шухăшланă: эпир партизансемпе лагерьти тыткăна лекнĕ çынсем хушшинче çыхăну йĕркелесе яма пулăшрăмăр, тесе калаттарасшăн пулнă. Çав хресчен хĕрарăмĕсене, тумтирсене хывса илсе, патаксемпе тата шомполсемпе хĕненĕ. Анчах та çав хĕрарăмсем, хăйсене тепле асаплантарнă пулин те, суя кăтартусем пама килĕшмен. Лангхельд çапах та вĕсене комендатурăна: партизансемпе лагерьти тыткăна лекнĕ çынсем хушшинче çыхăну тытса тăнă пек суя хăтланнисем палăртнă, тесе пĕлтернĕ. Вара çав 5 хĕрарăма персе пăрахнă.

ПРОКУРОР: — Хĕрарăмсем ултă пулнăччĕ-çке-ха. Ултăмĕшĕ ăçта пулнă?

ЛАНГХЕЛЬД: Ача пулнă тăрăх, ултăмĕшĕ хĕрарăм хăйĕн ачипе [illegible] Çав ултăмĕш хĕрарăм хăйĕн 5 çулхи ачипе пĕ пынăскер пулнă.

Прокурор çав ачана мĕн турĕç тесе ыйтнă хыççăн Лангхельд çапла калать:

— Вăл хăйĕн вилнĕ амăшне ыталасах илнĕ, хытă кăшкăрнă. Хĕрарăм вилĕмне [illegible] турттарса кăларма пынă офицерсем ăна [illegible] вăл çав ачана персе пăрахнă.

Залри халăх хирĕç çынсене пуçĕн сăмахĕсене хумханса тата çав тери тарăхса итлесе ларнă.

Лангхельд малалла çапла каласа парать: совет çыннисене [illegible] «газлă автомобиль» [illegible]

Айăпланакан каласа панинчен тыткăна лекнисен [illegible]

Малалла тĕпченисенчен çакă палăрса тăчĕ: Лангхельд вăрçă пуçланиччен майăн [illegible] Франкфурт хулинче [illegible] управленийĕнче [illegible] национал-социалист партине 1933-мĕш çулта кĕнĕ.

Лангхельда тĕпчесе пĕтернĕ хыççăн суд декабрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи 10 сехетчен, перерыв тăвасси çинчен пĕлтерет.

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи лару

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи ларура айăпланакан Лангхельдран малалла ыйтса тĕпченĕ. Вăл «газлă автомобиль» 1942-мĕш çулхи май уйăхĕнче Харьковра, «СД» штабĕн карти[illegible], ун çине çынсем тиенĕ чухне курни çинчен каласа парать. Вăл тĕттĕм-кăвак тĕслĕ хупă автомобиль, унăн алăкĕсем [illegible] хупăнаççĕ. Çавăн пек «газлă автомобиль» оккупациленĕ совет территорийĕнче нумай хуласенче: Харьковра, Полтавăра, Киевра, Смоленскра усă курнă. Лангхельд çав «газлă автомобильсем» Германи правительстви хушнипе усă курни çинчен калать. Вăл хăйĕн çывăх [illegible] хушшисенче асăннă: Фельдфебель Рунге персе пăрахмалли çынсем çинчен калакан приговорсене пурнăçа кĕртсе тăнă, [illegible] Шульц, старши ефрейтор Эйман тата Майнц —ытла тĕпчени чухне çынсене хĕненĕ тата мăшкăллама сĕре хутшăннă.

Лангхельд хыççăн суд айăпланакан Рицран, СС çарĕсенче унтерштурмбаннфюрер пулса ĕçленĕскертен, тĕпчесе ыйтать. Риц çапла калать: СС çарĕсемпе ахаль çар чаçĕсемпе усă курнă пекех усă кураççĕ, анчах та эсэсовецсен ыттисенчен çак енчен уйăрăлса тăмалла: çуллĕш енчен, национал-социалистсен ĕçне парăнни енчен, ариец пулни енчен т. ыт. те. Риц СС ротине ертсе пынă. Çав рота карательнăй орган пулса тăнă. Ăна Таганрог хулинчи «СД зондеркомандине» пулăшма янă. Вăл рота çынсене пере-пере пăрахнă. Ялсенчи халăхсене ирĕксĕр эвакуациленĕ, арестленисене турттарнă, хураллана.

Малалла айăпланакан отвечĕсенчен СС роти пуринчен ытла мирлĕ çынсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлени паларать. Эсэсовецсем старсене, хĕрарăмсене тата ачасене пĕтернĕ. Риц Таганрог районĕнче кăна вăл хушнă тăрăх 300 çынна вĕлерсе пĕтернине йышăнать.

— Мана Харьков хулинче Якобэ ятлă штурман тĕл пулма тивет, — калать айăпланакан.—Якобэ мана вĕсен тĕрмесене арестленисене тасатмалли уйрăм меслет пурри çинчен каласа пачĕ. Вăл меслет—çынсене «газлă автомобильпе» пăчăхтарса вĕлересси. Часах эпĕ, Якобэ ирĕк панипе, çав машинăна тĕрме картине кĕрсе куртăм. Якобэ çав машинăна хăй уçрĕ. Шал енчен машинăна тимĕр листасем çапса тухнă, урайне йывăç решетке хунă, решетке айĕнче нумай шăтăклă труба выртать. Çав шăтăксенчен мотор патĕнчен килекен газсем тухаççĕ. Çав газсемпе çынсене пăчăхтарса вĕлереççĕ те. Машинăна курса пĕтерсе кайсан, тĕрмерен арестленисене илсе тухма пуçларĕç. Вĕсем хушшинче тĕрлĕ çулти хĕрарăмсем тата стариксем пурччĕ. [illegible] вĕсен пит-куçĕсем çинче хĕненĕ паллăсем пурччĕ. Вĕсене машина патне кайма хушрĕç. Машина çине тиеме тытăнсан, арестленисенчен пĕр пайĕ машинăна кĕресшĕн пулмарĕ, анчах вĕсене тапа-тапа тата прикладсемпе çапа-çапа хăваласа кĕртрĕç.

Прокурор айăпланакантан вăл совет гражданĕсене персе пăрахнă çĕрте миçе хут пулни çинчен ыйтать. Айăпланакан июнĕн 2-мĕшĕнче Харьков çывăхĕнчи пĕр ялта çынсене персе пăрахнă çĕрте пулни çинчен калать. Унта 300 çынна çити персе пăрахмалла пулнă. Арестленисене, пысăк мар ушкăнсене пайласа, эсэсовецсем пере-пере пăрахнă.

— Эпĕ пĕр эсэсовецран автомат илтĕм те, — тет Риц,—арестленисем çине пĕр черет персе ятăм. Эпĕ астăватăп: персе пăрахнисем хушшинче ача йăтнă пĕр хĕрарăм пурччĕ. Вăл ачине сăлса хăварас тесе, ăна хăйĕн ӳчĕпе хӳтĕлерĕ. Анчах та çакă пулăшаймарĕ: пульăсем ăна хăйне те, унăн ачине те шăтарса тухрĕç.

Малалла айăпланакан Таганрогра тата унăн çывăхĕнчи вырăнсенче персе вĕлернисем çинчен каласа пачĕ. Унта 3.000 çынна яхăн вĕлернĕ. Вăл пĕрехинче Таганрог çывăхĕнчи пĕр шăтăкра 50 çынна персе пăрахни çинчен калать:

— Пеме тытăнсанах, шăтăкра юнланнă клеткесен купи пулса тăчĕ, — тет Риц.— Вĕсем хушшинче вилменнисем те пурччĕ. Вара эпĕ икĕ салтака çав шăтăка анса чĕрĕ юлнисене пурне те вĕлерме хушрăм. Çав икĕ эсэсовец хыççăн эпĕ те шăтăка антăм. Чĕрĕ юлнă икĕ çынна эпĕ пистолетпа персе вĕлертĕм.

Защитниксем ыйтусем панă хыççăн айăпланакан Рицран ыйтса тĕпчесси пĕтрĕ.

Малалла Германин вăрттăн полицийĕн 560-мĕш группин чиновникне—айăпланакана Рецлав Рейнгарда тĕпчеççĕ. Вăл Германин хирти вăрттăн полицийĕн чиновникĕсене хатĕрлемелли шкул пулса тăракан «Альтенбург» ятлă батальонра вĕреннĕ. Çав шкулта Германи правительстви паракан кăтартусене вырăс халăхне, кайра тăракан расса вырăнне хурса, пĕтерсе тăкмалли çинчен калакан кăтартусене вĕрентнĕ. Вăл практикăра çапла пулса пынă: ним айăпсăр арестленĕ совет гражданĕсене, чи малтан тӳсмелле мар хĕнесе асаплантараççĕ. Çапла майпа гитлеровецсем хăйсене кирлĕ сăмахсене калаттарма тăрăшаççĕ, — тесе кăтартса парать Рецлав. — Арестленĕ совет çыннисем нумайĕшĕсем хĕненине тӳсеймесĕр çавăнтах вилсе кайнă. Вăрттăн полици чиновникĕсем вара, вĕсем каланă пек туса, суя показанисем хатĕрленĕ. Нимĕç çарĕн командованийĕ совет çыннисене пĕтерме «газлă автомобильсемпе»—«душегубка» текен машинăсемпе усă курнă. Çав тискер преступленисене тунă çĕре Рецлав тӳрремĕнех хутшăннă.

— «Газлă автомобиль» мĕн тума кирлине никама пĕлтермесĕр сыхласа усранă, анчах та ун çинчен хăшпĕрисем пĕлнĕ. Арестленисенчен хăшпĕрисем хăйсене «газлă автомобильсем» çине лартнă чухне хирĕç тăратчĕç. Вĕсене вара машинăсен ăшне туясемпе, прикладсемпе, пистолетсен аврисемпе хĕне-хĕне кĕртетчĕç, —каласа парать Рецлав. — Арестленисем хушшинче стариксем те, хĕрарăмсем те тата ачасем те пурччĕ... Пĕррехинче çапла пулнине астăватăп: пĕр хĕрарăм аллинчен унăн ачине туртса илнĕ хыççăн, вăл, хытă кăшкăрса макăрса СД офицерĕ патне пырса, унăн пит-куçне чавса пĕтерчĕ. Çав офицер вара пистолет туртса кăларчĕ те хĕрарăма çавăнтах персе пăрахрĕ.

—«Газлă автомобильпе» усă курса миçе совет çыннине вĕлернĕ, — тесе ыйтать прокурор.

— Эпĕ пĕлетĕп, — тет айăпланакан, — март уйăхĕнче пĕтĕмпе 5000 çынна вĕлернĕ. «Газлă автомобиль» кашни кун çӳренине шута илсен, вăл машинăпа Харьков хулинче кăна 30.000 çынна çити пăчăхтарса вĕлернĕ тесе шутлама пулать.

Рецлав малалла вăрттăн полицин «ГФП» группи Иваньков, Переяслав, Лубны, Полтава, Житомир хулисенче те çавăн пек ĕçлени çинчен каласа парать.

— Эсир пулнă пĕтĕм хуласенче совет çыннисене мĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтернĕ? — ыйтать председатель.

— Хирти вăрттăн полици кăна Житомир хулинче 5—8 пин çынна яхăн вĕлернĕ. Тĕрĕс цифрăсене илсе кăтартма пултараймастăп.

Председатель Рецлавран Переяслав тата Лубны хулисенче совет гражданĕсене мĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтерни çинчен ыйтать.

—...Вăл хуласенче,—тет Рецлав,— совет çыннисене пĕтерес тĕлĕшпе СД органĕсем ĕçленĕ. Эпĕ çаксем çинчен пĕлетĕп: совет гражданĕсене Киев хулинче 35.000 çынна, Лубны хулинче 4000 çынна тата Переяслав хулинче 2000 çынна пĕтернĕ...

Рецлав малалла каланинчен совет çыннисене массăллăн пĕтерес тĕлĕшпе хирти полицин 560-мĕш группинчи пур работниксем те ĕçлени паларать.

Рецлав, çынсене «газлă автомобиль» çине тиенĕ çĕрте хăй те икĕ хутчен пулнине йышăнса, гитлеровецсем «газлă автомобильте» пăчăхтарса вĕлернĕ çынсене çунтарса пĕтерни çинчен калать.

— Пăчăхтарса вĕлернĕ çынсен виллисене пĕр баракăн коридорне купаласа хунă хыççăн, СД салтакĕсем баракка кĕчĕç те çав виллесем çине бензин сапрĕç. Çавăн пекех баракăн шалти стенисем çине те бензин сапрĕç. Унтан вара СД салтакĕсем барака çунакан факелсем пăрахса çунтарса ячĕç. Эпĕ çавăн пек майсемпе тата 6 барака çунтарнине куртăм.

Хирти вăрттăн полици комиссарĕ Мелисс арестленисене ыйтса тĕпченĕ чухне чеелĕхсемпе усă курма хушатчĕ. Вăл пĕррехинче допрос тунă çĕрте пулса Рецлава мĕнле асаплантармаллине кăтартса панă.

— Куратăр-и, — тенĕ Мелисс, арестленисем çине тĕллесе кăтартса, —унăн акă сухалĕ питĕ лайăх, унăн сухал пĕрчисене турта-турта кăларăр, теприне йĕппе тиркелĕр.

Рецлав çав приказа тĕрĕс пурнăçа кĕртнĕ. Çавăн пек асаплантарнă хыççăн та совет çыннисем палачсен ыйтăвĕсем çине ответлемен. Çакăн хыççăн вара, хирти вăрттăн полици комиссарĕ хушнă тăрăх, Харьковри трактор заводĕнчи ним айăпсăр 15 рабочине персе пăрахнă.

—Çав 15 рабочине айăплама мĕнле те пулин айăпсем тăратрăр-и эсир, —ыйтать председатель.

— Çук, паман. Вăрттăн полицире, тĕрĕссипе каласан, нимĕнле ĕçсем те пуçарман тата айăпласа çырнисем те пулман, — ответлет Рецлав. — Эпĕ ахальтен список турăм та ăна полици комиссарне патăм. Çав список тăрăх персе вĕлернĕ вĕсене.

Рецлав çавăн пек меслетсемпе икĕ хут усă курни çинчен—пĕррехинче апрель уйăхĕнче полици комиссарĕ Кархан хушнипе, тепрехинче—унтан каярахпа, электростанцинчи рабочисене арестленĕ чухне полици комиссарĕ Вульф хушнипе усă курни çинчен пĕлтерет.

Рецлав малтан радист пулнă, ун хыççăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене сыхланă çĕрте ĕçленĕ. Ăна хăйĕн малтанхи начальникĕ суйласа илнĕ те «Альтенбург» батальонне янă. Унта вăл çынсене вĕлермелли тата улталамалли ултă уйăхлăх курсра вĕренсе, вăрттăн полици чиновникĕн ĕçĕсене тума хатĕрленнĕ.

— Кам вĕрентрĕ сире совет çыннисене пĕтерме? — ыйтать председатель.

— Вĕсем — различи знакĕсем тăрăх Германин хирти вăрттăн полицийĕн ертсе пыракан сотрудникĕсемччĕ, — пĕлтерет айăпланакан.

Рецлав, ним айăпсăр совет çыннисене пĕтерес тĕлĕшпе хăй пĕр вĕçĕмсĕр ĕçленине йышăнса, хăй тӳрремĕнех пăхăнса тăракан командирсен приказĕсене пурнăçа кĕртсе пыни çинчен калать.

—Камсем-ха совет çыннисене пĕтерме хушатчĕç? — тесе ыйтать председатель.

— Эпĕ хамăн начальниксенчен приказсем илеттĕм, — ответлет Рецлав. — Тата çавăн пекех çакна хушса калас̧шăн: Германи халăхне национал-социалистсен руководителĕсем темиçе çул хушши çавăн пек политикăна пăхăнма воспитани парса пынă.

Ирхи лару Тăван çĕршыва сутакана — Харьковри «СД зондеркомандин» шоферне Буланова тĕпченипе вĕçленнĕ.

Буланов гитлеровецсене турттарса çӳренĕ, совет çыннисене арестлесе пере-пере пăрахнă. 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче, — тесе пĕлтерет вăл, — нимĕçсем Харьков хулинчи больницăра выртакан çынсен пысăк ушкăнне персе пăрахрĕç. Буланов çав çынсене персе пăрахмалли вырăна илсе пырас ĕçе хутшăннă. Вăл 3 тоннăллă машинăпа 4 хут кайса килсе 150 çын турттарса пынă. Сывмар çынсене аялти кĕпесем вĕççĕнех илсе тухса тиенĕ. Нижне-Чирская станицăра та çынсене çавăн пекех тискеррĕн персе пăрахнă. Çакăнта та Буланов хутшăннă. Нижне-Чирская станицăри больницăра выртакан ачасене автомобильсем çине тиесе 4 çухрăма илсе кайнă. Буланов ачасене машина ăшĕнчен турта-турта кăларса, персе пăрахмалли шăтăксем патне илсе пырса тăратнă. Унта нимĕç офицерĕ тăнă, вăл ачасене пĕрерĕн-пĕрерĕн персе пăрахнă. Ачасем вĕçерĕнсе тарма тăрăшнă, кăшкăрса макăрнă, хăйсене ирĕке яма ыйтнă, анчах та нимĕç палачĕ нимĕнпе те килĕшмен, пур ачасене те персе пăрахнă: Ачасем 6 çулхисенчен пуçласа 12 çулхисем таранччен пулнă.

— Хăвăрăн сутăнчăкла ĕçсемшĕн нимĕçсенчен мĕнле наградăсем илтĕр эсир, — тесе ыйтать прокурор Булановран.

—Мана укçа тӳлетчĕç, — ответлет Буланов, — çавăн пекех эпĕ паек илсе тăраттăм. Вĕсемсĕр пуçне, персе пăрахнă совет çыннисен япаллисене, нимĕç офицерĕсем лайăххисене суйласа илнĕ хыççăн, клеттĕмччĕ...

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи ларура айăпланакан Булановран ыйтса тĕпчессине вĕçленĕ.

ХАРЬКОВ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Чехословакин государство совечĕн ларăвĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Совет Союзĕпе Чехословаки хушшинче договор тунă ятпа Чехословакин государство совечĕ лару туса ирттернĕ.

Государство совечĕн председателĕ Прокоп Макса ларăва уçнă чухне çапла каланă: çак договор Чехословакишĕн çеç мар, Европăн вăтаçĕртипе кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи мĕнпур государствăсемшĕн те питĕ паха пулса тăрать, тенĕ. «Çак договора тунипе,—тенĕ вăл,—эпир Чехословаки халăхĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕмĕр».

Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн ĕçĕсене туса тăракан Губерт Рипка, договорăн пĕтĕм историне каласа парса, договор пĕтĕм Европа пурнăçне лайăхлатма пулăшнине палăртнă.

Совет Союзĕпе Чехословаки договор туни çинчен Англи хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Совет Союзĕпе Чехословаки республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен 20 çуллăха договор тунине Англи хаçачĕсем ăшă кăмăлпа ырлаççĕ, çав договор вăл вăрçă хыççăнхи Хĕвелтухăç Европăна йĕркелемелли пĕрремĕш утăм пулса тăрать, теççĕ. Хаçатсенчен нумайĕшĕ: Польшăн та çав договора алă пусмалла, тесе çыраççĕ.

Совет Союзĕпе Чехословаки пактне хаçатсем Европăра малашне мир туса хумалли питĕ хаклă инструмент пулса тăрать тесе шутлаççĕ. Çывăх вăхăта илсен, вăл Польшăна Совет Союзĕпе çыхăнма май памалла, теççĕ.

«Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Европăн пĕр пайĕнче тарритори пирки тата ытти тĕлĕшпе те государствăсен интересĕсене тивекен, пĕр-пĕринпе çыхланса пĕтнĕ, пĕр-пĕрне хирĕç пыракан ыйтусем нумай тухса тăнă. Çак договор ĕнтĕ Европăн çав пайĕнче кӳршĕсем пĕр-пĕринпе туслăн пурăнмалли политикăна пурнăçа кĕртни пулса тăрать», тет.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çапла çырать: «Договор туни Хĕвелтухăç Европăна малашне организацилеме кирлĕ пĕрремĕш утăм пулса тăрать. Англи правительстви çак ĕçе пĕтĕмĕшпех ырлать, çав ĕç çинчен Иденпа Молотов Мускавра нумаях пулмасть пулса иртнĕ конференцире калаçнă. Тĕрĕссипе каласан, çак договор вăл Англипе Совет Союзĕ тунă договорпа пĕр пекех... Çав договорсем иккĕшĕ те Европăри мире сыхламалли тата реконструкци ĕçĕнче пĕр-пĕринпе активлăн килĕштерсе ĕçлемелли системăна палăртса параççĕ».

РУЗВЕЛЬТ США-на ТАВĂРĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Президент Рузвельт Çывăхри-Хĕвелтухăçĕнчи конференцисенче пулнă хыççăн США-на таврăннă.

ЧЕРЧИЛЛЬ ЧИРЛЕНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин премьер-министрĕн заместителĕ Эттли палатăсен общининче çапла каланă: премьер-министр резиденцийĕнче Черчилль сывлăхĕ çинчен çакăн пек бюллетень пичетлесе кăларнă: «Шăнса пăсăлнă пирки премьер-министр темиçе кун вырăнпах выртнă. Халь унăн сулахай ӳпки пĕр тĕлте шыçма пуçланă. Сывлăхĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, начар мар».

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă бюллетеньре премьер-министрăн сывлăхĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, аванланса пыни çинчен пĕлтернĕ.

РОВНО ХУЛИНЧЕ ГИТЛЕРЛА ПУÇЛĂХА ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен «Минскер цейтунг» ятлă фашистла хаçачĕ гитлерла пуçлăхсенчен пĕрне, эсэсовецсен обер-фюрерне Альфред Функа вĕлерни çинчен пĕлтерет, ăна учрежденире, хăйĕн пӳлĕмĕнче вĕлернĕ.

НИМĔÇСЕМ ИТАЛИН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ОФИЦЕРĔСЕНЕ ПЕРСЕ ВĔЛЕРЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америка çарĕсемпе пĕрле Миньяно секторĕнче кĕрешекен Итали çарĕн генералĕ çапла каланă: нимĕçсем Италин тыткăна лекнĕ офицерĕсене пурне те персе вĕлереççĕ, тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкări çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче кĕрешекен Çĕнĕ Зеланди çарĕсем ăнăçлăн тапăннă. Тăшман икĕ хутчен вăйлă контратака тунă, анчах вăл лару-тăрăва тӳрлетес тесе тăрăшни усăллă пулман, ăна йывăр çухатусем тӳстернĕ. Çак фронтăн тепĕр участокĕнче позицисене лайăхлатнă. Тăшманăн пур контратакисене те ăна пысăк çухатусем кӳрсе сирсе пăрахнă.

Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине пăхмасăрах, фронтăн çурçĕр пайĕнче хăшпĕр питĕ паха участоксене тытса илнĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Берлинри тĕрлĕ объектсене тапăннă.

Хула çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 1.500 тонна ытла пăрахнă. Бомбăсем ӳкнĕ районсенче вăйлă пушарсем тухнă.

Англи авиацийĕн ытти соединенийĕсем Çурçĕр Францири тĕрлĕ объектсене атакăланă. «Москито» ятлă бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă. Англин 30 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ АРАВЕ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ официально пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Çĕнĕ Британи утравĕн кăнтăр çыранĕ çывăхĕнчи Араве утравĕ çине аннă.

Ответлă редакторăн
заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти пир-авăр фабрики çумĕнче ФЗУ ШКУЛĔ УÇĂЛАТЬ. Унта 6 уйăх хушши вĕренмелле. Шкула 14—18 çулхи çамрăксене илеççĕ.

Шкул пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлеме квалификациллĕ рабочисем хатĕрлет. Вĕренекенсене укçасăрах тăрантараççĕ, тумтир параççĕ, общежитире усраççĕ.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче вĕренме пуçламалла.

Заявленисене кулленех 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен йышăнаççĕ.

АДРЕС ÇАПЛА: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, Отдел кадров хлопчато-бумажной фабрики.

ШОФЕРСЕМ ХАТĔРЛЕКЕН КУРСА ВĔРЕНМЕ ИЛЕÇÇĔ.

Вĕренме 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пуçламалла.

Мĕн пурĕ 2 уйăх вĕренмелле.

Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, 17 çултан кĕçĕн пулмалла мар. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пуринчен малтан илеççĕ.

Вĕренекенсене стипенди параççĕ тата тăрантараççĕ.

Вĕренме килекен колхозниксен колхозри ĕçрен хăтарни çинчен справка илсе килмелле.

АДРЕС ÇАПЛА: гор, Чебоксары, ул. Кадыкова, 19, Автошкола. 3—1.

Ишлей районĕнчи Ваççилкасси потребитель кооперацийĕн çаврашка пичетне, çухалнă пирки, законлă мар тесе шутламалла.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, декабрĕн 19-мĕшĕнче, юлашки кун сасла илемлĕ

„МЕЧТА“

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Декабрĕн 20 мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасла илемлĕ

„ЖДИ МЕНЯ“

ятлă лирикăллă çĕнĕ киноповесть кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20 тата 22 сехетре.

Вăрнар леспромхозĕнче вăрман хатĕрленĕ чухне 1943 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче икĕ лаша çухалчĕ. Пĕрин паллисем çапла: ячĕ—„Макс“, 1925 çулта çуралнă, тĕсĕ—çутă хĕрлĕ, çамки—хушка, çӳллĕшĕ—146 см. Теприн паллисем çакăн пек: ячĕ—„Тришка“, кастарнă, 1924 çулта çуралнă, тĕсĕ—тĕксĕм кăвак, çӳллĕшĕ—150 см.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Чебоксарский район, Правлению Вурманкасинского колхоза им. Н. К. Крупской.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—39, промышленноçпа ял хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 487

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.